28-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 7 ЭРНЕКУН 237 (6988) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕ, ЧАССР Верховнăй Совечĕ тата Шупашкар хула Совечĕн хаҫачĕ

IV-мĕш КВАРТАЛТИ ФИНАНС ПЛАННЕ ПĔТĔМПЕХ ТУЛТАРАР

1945 ҫулхи бюджета тултарасси укҫа-тенкĕ пухмалли плана кашни ял Совечĕ, кашни районпа хула мĕнле тултарнинчен, промышленность предприятийĕсем, суту-илӳпе вăрман хатĕрлев организацийĕсем хăйсен обязательствисене мĕнле тултарса пынинчен килнине пурте лайăх пĕлеҫҫĕ.

Иртнĕ кварталсенче нумай районсем укҫа-тенкĕ пухмалли плана—налог тӳлевĕсем тăрăх та, госстрах тӳлевĕсем тăрăх та, заем укҫи тăрăх та тултараймарĕҫ, ҫавăнпа та ĕнтĕ вĕсем учительсене, врачсене, ялхуҫалăх специалисчĕсене, политпросвет учрежденийĕсен работникĕсене вăхăтра ĕҫукҫи тӳлеймеҫҫĕ, ҫаван пекех тата тĕрлĕ мероприятисене укҫа-тенкĕ парса тăраймаҫҫĕ.

IV-мĕш кварталта республикăн тĕрлĕрен налог тӳлевĕсене 90 миллион тенкĕ ытларах пухмалла. Кунсăр пуҫне тата иртнĕ вăхăтсенче тӳлесе татман ытти тĕрлĕ тӳлевсене тата Тăваттăмĕш Военнăй Заемăн укҫине чылай пухмалла. Ҫак укҫа-тенкĕ ĕнтĕ, паллах, хăйех пухăнас ҫук.

Финанс планĕ хăй тĕллĕнех тулма пултарать текен финанс работникĕсемпе районсен руководителĕсем питĕ пысăк йăнăш тăваҫҫĕ.

Пирĕн пурин те ҫакна ҫирĕп асра тытмалла: ҫулталăк пĕтичченхи кĕске вăхăтра финанс планне тултарас тесен, районсемпе хуласенчи финанс, перекет кассисен, госстрах работникĕсен тăрăшса ĕҫлемелле.

Ҫулталăк пĕтиччен пĕр уйăх та юлмарĕ, халĕ ĕнтĕ пирĕн тӳрех ҫапла каламалла: ҫак пысăк задачăна пĕр финанс работникĕсем ҫеҫ пурнăҫа кĕртме пултараймаҫҫĕ. Кунта финанс органĕсене районсемпе хуласенчи партипе совет органĕсен руководителĕсем вăйлăн пулăшмалла.

Ҫакна шута илсе ĕнтĕ парти Обкомĕн бюровĕ ноябрĕн 25-мĕшĕпе декабрĕн 25-мĕшĕ хушшинче финанс планне тултармалли уйăхлăх тума йышăнчĕ.

Уйăхлăх тăвасси ҫинчен пĕлтерни вăл, партипе совет органĕсем ун ҫине ҫиелтен ҫеҫ пăхаҫҫĕ пулсан, ăна ăнăҫлă ирттерме нимĕнле мерăсем те йышăнмаҫҫĕ пулсан, нимĕнле усă та памасть-ха. Халĕ пĕр кун тăхтамасăрах районри актива, финанс работникĕсене укҫа-тенкĕ пухас ĕҫе организацилеме ял Советсемпе колхозсене кăларса ямалла.

Кашни ял Советĕнче, колхозра, ял Совет тата колхоз председателĕсемпе пĕрле, кашни хуҫалăха тĕрĕслесе тухмалла. Тĕрĕсленĕ чух вара хуҫалăх хăйĕн укҫа-тенкĕ тӳлевĕсене тӳлесе татнипе татманнине палăртмалла. Хуҫалăх хăйĕн тӳлевĕсене татман пулсан, ҫав тӳлевсене чи кĕске вăхăтрах тӳлеттермелле.

Ҫак уйăхлăхра укҫа-тенкĕ парăмĕсене пĕтĕмпех пухса пĕтерес тесе, халăх хушшинче массăллă ăнлантару ĕҫне анлăн сарса ямалла.

Пирĕн пĕтĕм ҫĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет. Пирĕн партин Центральный Комитечĕ Совет Союзĕнчи ĕҫҫыннисене ҫак суйлава ĕҫре ҫĕнĕ ҫĕнтерӳсем туса палăртма чĕнет. Ҫак чĕнĕве ырласа пĕтĕм ҫĕршывĕпе СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Пирĕн республикăри чылай районсенчи финанс работникĕсем финанс планне тултармалли уйăхлăха активлăн хутшăнчĕҫ, СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту организацилесе IV-мĕш кварталти финанс планне декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарма татăклă обязательствăсем илчĕҫ.

Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Ҫĕрпӳ районĕ IV-мĕш кварталти финанс планне 104,6 процент тултарчĕ, ку шутра: налог тӳлевĕсем тăрăх—101 процент, ялхуҫалăх налогĕсем тăрăх—105,3 процент, страховка тӳлевĕсем тăрăх—114,6 процент, перекет кассисем тăрăх—111,9 процент тултарнă. Кунта район руководителĕсем, ял Совет председателĕсем, мĕнпур налог агенчĕсем финанс планне тултарас тĕлĕшпе ҫав тери тăрăшса ĕҫлерĕҫ.

Ҫавăн пекех Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар, Красноармейски, Чурачăк, Елчĕк, Муркаш, Ишлей районĕсем те декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне IV-мĕш кварталти финанс планне 70—90 процент таран тултарчĕҫ.

Ҫак асăннă районсенчи финанс работникĕсем, партипе совет органĕсен руководителĕсем финанс планне декабрĕн 25-мĕшĕччен тултарас тесе тăрăшса ĕҫлеҫҫĕ, вĕсем уйăхлăх пĕтнĕ тĕле пур парăмсене те пухса пĕтерме тăрăшаҫҫĕ.

Ҫак районсенчи руководительсем хăйсен районĕнчи кашни суйлавҫăна СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне государство умĕнчи пур парăмсене те парса таттарма тăрăшаҫҫĕ.

Государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăҫа кĕртсе пырасси вăл—кашни гражданинăн чи таса тивĕҫĕ пулса тăрать. Ăна пирĕн государствăн Тĕп Законĕнче—Сталинла Конституцире ҫырса хунă.

IV-мĕш кварталти финанс планне Октябрьски, Советски, Вăрмар Шупашкар, Чкаловски, Шăхасан тата Тăвай районĕсем 60—70 процент тултарчĕҫ. Ҫак районсенчи финанс работникĕсене райсовет исполкомĕсемпе районри парти организацийĕсем лайăхрах пулăшнă пулсан, вĕсен результачĕсем чылай ăнăҫлăрах пулнă пулĕччĕҫ. Ҫак асăннă районсем IV-мĕш кварталти финанс планне пур тӳлевсем тăрăх та срокченех тултарма пултараҫҫĕ. Кунта райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсен тăрăшарах ĕҫлени ҫеҫ кирлĕ.

Ялти активистсенчен чылайĕшĕ, ҫавăн пекех тата районри хăшпĕр ответлă работниксем хăйсем те налог, страховка тӳлевĕсене, заем укҫине тӳлесе татман. Районри ытти ҫынсем вара активран пример илеҫҫĕ. Ҫавăнпа та чи малтанах ялти активистсене хăйсен парăмĕсене таттарма тăрăшмалла, вара ĕҫ чылай ҫăмăлланма пултарать.

Улатăр, Элĕк, Йĕпреҫ, Калинино, Канаш, Куславкка, Сĕнтĕр тата Етĕрне районĕсем IV-мĕш кварталти финанс планне 50—60 процент таран тултарнă. Ҫак районсен руководителĕсем финанс планне тултарас ĕҫе ертсе пырассине вăйлатас вырăнне, IV-мĕш кварталта палăрмаллах япăхрах ĕҫлеме пуҫланă. Ҫак районсен ҫавăн пек япăх ĕҫлеме мĕнле те пулин сăлтав пур-ши? Ҫук.

Ҫак районсенче IV-мĕш кварталти финанс планне тултарас тĕлĕшпе ҫавăн пек япăх ĕҫленине райсовет исполкомĕсен председателĕсем, районри фананс пайĕсен заведующийĕсем, ҫавăн пекех тата ял Совет председателĕсемпе налог агенчĕсем сӳрĕкрех ĕҫлеме пуҫланипе ҫеҫ ăнлантарса памалла. Вĕсем финанс планĕ хăех тулĕ-ха, тесе лараҫҫĕ пулас.

Ҫак районсенче финанс планне ҫителĕксĕр тултарнине пула ĕнтĕ вăхăтра ĕҫукҫи тӳлесе пыраймаҫҫĕ, налог тӳлевĕсем тĕлĕшпе вĕсем пысăк парăма кĕрсе кайнă, юлашки вăхăтра тата заем укҫине пухма пачах та чаранă. Финанс планне тултарас тĕлĕшпе ҫакăн пек сӳрĕк ĕҫленине текех чăтма ҫук.

Пирĕн государствăн ҫарпа экономика тĕлĕшĕнчи хăватне ӳстерес ĕҫре укҫа-тенкĕ чи паллă вырăнсенчен пĕрне йышăнса тăрать. Ҫавăнпа та финанс планне тултарас тĕлĕшпе районсен руководителĕсен, ял Совет председателĕсен тата финанс агенчĕсен татăклă мерăсем йышăнмалла. IV-мĕш кварталти финанс планне тултарас ĕҫе мĕнпур общественноҫа, мĕнпур финанс работникĕсене, районсемпе ялсенчи мĕнпур актива мобилизацилемелле. IV-мĕш кварталти финанс планне тултарма пирĕн пур майсем те пур.

Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Пăрачкав, Ҫĕмĕрле, Кувакино тата Первомайски районсем финанс планне тултарас тĕлĕшпе чăтма ҫук начар ĕҫлеҫҫĕ. Ҫак асăннă районсем IV-мĕш кварталти финанс планне 45 процент таран ҫеҫ тултарнă. Ҫакна пула ĕнтĕ ҫак районсенче ялти бюджетран ĕҫукҫи илсе пурăнакан хăшпĕр работниксем 5—6 уйăх хушши ĕҫукҫи илеймеҫҫĕ.

Ҫакна текех чăтса тăма пулать-и? Ҫук. Район укҫа-тенкĕ тĕлĕшпе ҫакăн пек хăрушлăх умне пырса тухнăшăн чи малтанах райсовет исполкомĕн председателĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем ответ тытаҫҫĕ. Ҫавăнпа та вĕсен районри финанс планне тултарас тĕлĕшпе халех тивĕҫлĕ мерăсем йышăнмалла.

Юлашки вăхăтра Шупашкарта, Улатăрта, Ҫĕмĕрлере укҫа-тенкĕ пухас ĕҫе сӳрĕклетнине палăртмалла. Хула Совечĕсен тата хуласенчи финанс пайĕсен ку тĕлĕшпе ĕҫе вăйлатмалла, IV-мĕш кварталти финанс планне кирек епле пулсан та тултармалла.

IV-мĕш кварталти финанс планне хăвăртрах тултарас тесен, мĕн тумалла-ха? Чи малтанах пур ял Совечĕсенче те, районсенче, хуласенче тата финанс работникĕсем хушшинче СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла. Финанс планне тултарма районсемпе ялсенчи мĕнпур общественноҫа, ялсемпе колхозсенчи коммунистсемпе комсомолецсене, активистсене ура ҫине тăратмалла.

СССР Верховный Совечĕн суйлавне пирĕн халăх Ленин—Сталин партийĕ тавра, хамăрăн юратакан ҫулпуҫăмăр Сталин юлташ тавра нихăҫанхинчен таччăнрах пĕтĕҫсе пырать. СССР Верховный Совечĕн суйлавне совет халăхĕ социализм строительствин пур отраслĕсенче те ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем туса палăртать. Пирĕн умра ĕнтĕ халăхăн политикăллă тата ĕҫри ҫĕкленĕвне государство планĕсемпе заданийĕсене тултарас ĕҫе ярас задача тăрать. Ҫавăнпа та халĕ парти, совет тата финанс органĕсен руководителĕсен, ҫавăн пекех тата ял Совет председателĕсемпе финанс агенчĕсен IV-мĕш кварталти финанс планне тултарас тĕлĕшпе ҫине тăрсах ĕҫлемелле.

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ.

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ҪУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА ДЕКАБĔРĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	плана тултарнă	Районсем	плана тултарнă
1. Красноармейски	111,1	16. Пăрачкав	100,2
2. Етĕрне	110,8	17. Елчĕк	98,2
3. Чурачăк	110,2	18. Вăрмар	95,4
4. Вăрнар	110,0	19. Канаш	93,6
5. Советски	109,1	20. Хĕрлĕ Чутай	91,1
6. Муркаш	109,0	21. Йĕпреҫ	89,7
7. Сĕнтĕр	107,9	22. Куславкка	89,2
8. Шупашкар	107,2	23. Комсомольски	85,4
9. Элĕк	106,4	24. Улатăр	81,1
10. Калинино	105,2	25. Первомайски	79,5
11. Шăхасан	104,6	26. Ҫĕмĕрле	77,3
12. Сĕнтĕрвăрри	104,2	27. Чкаловски	76,1
13. Октябрьски	104,1	28. Тăвай	76,0
14. Ҫĕрпӳ	103,9	29. Шăмăршă	61,7
15. Ишлей	100,2	30. Кувакино	50,2

1946-МĔШ ҪУЛШĂН АК-КАКАЙ ПАРАҪҪĔ

Етĕрне районĕнчи чылай колхозсем государствăна 1946 ҫулшăн аш-какай параҫҫĕ. «Сура» тата Суворов ячĕпе тăракан колхозсем 1946 ҫулхи II-мĕш кварталшăн аш-какай парса татнă. «Комбайн» колхоз аш-какай ҫитес ҫулшăн парса татас тесе 40 пуҫ выльăха самăртма тăратнă. 1946 ҫулшăн 12 центнер аш-какай панă. Ҫак колхозсем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана пур енчен те тултарнă.

Швелькин васкамасть...

Сĕнтĕр районĕнчи Шашкар ял Советĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхоз тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе чăтма ҫук начар ĕҫлерĕ: 1,5 гектар вире пухса илеймерĕ, 15 гектар клевера ҫулмасăр хăварчĕ, 1 гектар ытла кăларман ҫĕрулми юр айне юлчĕ.

Колхоз ҫак вăхăта ҫитсе те авăн ҫапса пĕтермен. 10 гектар сĕлĕ халĕ те хиртех суратра ларать. Авăн ҫапас ĕҫ ытла та начар пырать. Колхоз председателĕ Швелькин тырпул пухса кĕртес ĕҫе кирлĕ пек организацилес вырăнне, вăхăта ытларах ĕҫкĕре ирттерчĕ. Халĕ ĕнтĕ ҫакăн пек пысăк тăкаксем пулнă хыҫҫăн: ҫын ҫитмерĕ тырпула пухса кĕртме, авăн ҫапса пĕтерĕпĕр-ха, тесе хăйне хăй лăплантарса ларать.

А. КАСЕЕВ.

Укҫа-тенкĕ парса татма васкамаҫҫĕ

ЧУРАЧĂК. 1945 ҫул пĕтесси нумай юлмарĕ, анчах «Малти Ямаш» колхоз государствăна укҫа-тенкĕ парас тĕлĕшпе 12.000 тенкĕ парăма кĕнĕ. Кунсăр пуҫне, нумай колхозниксем государство умĕнче ялхуҫалăх налогĕ тӳлес тĕлĕшпе парăмлă. Ялти актив ял Совет исполкомне укҫа-тенкĕ пухас ĕҫре пулăшса пырас вырăнне, хăй чĕрмантарса пырать. Акă, колхоз председателĕ Г. Яковлев государствăна 600 тенкĕ, сельпо председателĕ В. Давыдов 400 тенкĕ, бригадир Т. Давыдов 300 тенкĕ ытла, старши конюх 500 тенкĕ тӳлесе татман.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратҫҫĕ

ШУПАШКАР ХУЛИНЧЕ

Шупашкарта участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратас ĕҫ пуҫланчĕ.

Чăвашшвейпромсоюзра ĕҫлекенсен коллективĕ участокри суйлав комиссин составне Михаил Алексеевич Зарубин юлташа кандидата тăратма йышăннă. Зарубин юлташ Чăвашшвейпромсоюз президиумĕн членĕ пулса ĕҫлет.

Чăвашсен государствăн педагогика институчĕпе учительсен институчĕсем ҫумĕнчи комсомолăн пуҫламĕш организацийĕн пухăвĕ пулса иртнĕ. Комсомолецсем, пĕр саслă пулса, суйлав комиссийĕн составне Августа Васильевна Лысенина комсомолкăна кандидата тăратнă. Лысенина юлташ институтра «отлично» вĕренет, обществăллă ĕҫе те активлăн хутшăнать.

Чăвашсен медицина науки обществин ларăвĕ, пĕр саслă пулса, РСФСР-ĕн тава тивĕҫлĕ врачĕ Н. Н. Лупова юлташ сĕннипе Юлиана Александровна Рябушкина врачăн кандидатурине тăратма йышăннă. Рябушкина юлташ паллă специалист, ăна халăх хушшинче лайăх пĕлеҫҫĕ.

Шупашкарти сыхăну конторинче ĕҫлекенсем участокри суйлав комиссин составне ватă производственника, 26 ҫул хушши сыхăну ĕҫĕнче хастарлă ĕҫлекенскере, Сергей Александрович Андреев юлташа тăратма йышăннă.

Чăваш АССР-ĕнчи Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатĕнчи коммунистсен партийĕн пуҫламĕш организацийĕнчен Наркомземăн мелиораци управленийĕн начальникне Сидор Васильевич Васильев юлташа кандидата тăратнă.

Комсомолецсемпе ҫамрăксем вĕренӳре

ОКТЯБРЬСКОЕ. СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май районри комсомолецсемпе ҫамрăксен политикăллă хастарлăхĕ нумай ӳсрĕ. Колхозсенчи комсомол организацийĕсем ҫумĕнче суйлав законне вĕренме 88 кружок организациленĕ. Вĕсенче пурĕ 376 комсомолец вĕренет. Кружок руководителĕсем пулса ĕҫлеме коммунистсемпе хастарлă комсомолецсене тата учительсене уйăрнă. Вĕсемпе малтан ятарласа семинар тата каласусем ирттернĕ. Акă, Энтри пасар ялĕнчи политкружокра 25 ҫамрăк вĕренет. Кружок занятийĕсем эрнере икĕ хутчен пулса иртеҫҫĕ. Кунта суйлав Положенийĕсĕр пуҫне СССР Сталинла Конституципе В. М. Молотов юлташ докладне тĕплĕн вĕренеҫҫĕ. Хаҫатсенче «СССР Конституцийĕ ҫинчен каласусем» темăпа пичетленсе тухнă статьясене пĕрлешсе вуласа тухаҫҫĕ, вĕсем тăрăх каласусем ирттереҫҫĕ.

Суйлав кампанине хатĕрленнĕ май ВЛКСМ райкомĕ ҫумĕнчи штатра тăман докладчиксем хăйсен ĕҫĕсене нумай лайăхлатрĕҫ. Кунта штатра тăман докладчиксен группинче 11 ҫын тăрать. Вĕсем кашниех ҫамрăк суйлавҫăсем хушшинче докладсем туса панă. Акă, Шĕнерпуҫĕнчи вăтам шкулти учительница-комсомолка З. Кангина юлташ ял Советĕнчи ҫамрăк суйлавҫăсен пухăвĕнче «Совет гражданĕсен прависемпе обязанноҫĕсем», «Сталинла Конституци» темăсемпе докладсем туса панă. Ҫавăн пекех Чăнкассинчи тата Шанарти 7 ҫул вĕренмелли шкулсенчи М. Михайлова тата Т. Яковлева учительница-комсомолкăсем те ҫамрăк суйлавҫăсен пухăвĕсенче лекцисем туса панă.

Нумай комсомолецсем халь хăйсем агитаторсем пулса ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем ватă колхозниксем патне килĕрен ҫӳресе суйлав Положенине ăнлантараҫҫĕ.

А. МАКАШИНА,
ВЛКСМ райком секретарĕ.

ЛАЙĂХ ВУЛАВ ҪУРЧĔ

Елчĕк районĕнчи Тăрăм ял Советĕнчи вулав ҫурчĕ лайăх ĕҫлеме тытăнчĕ. Унта драма, спорт, ҫар ĕҫ тата хор кружокĕсем ĕҫлеҫҫĕ. Кружоксен ĕҫне ялти ҫамрăксем кăна мар, ватă ҫынсем те хутшăнаҫҫĕ. «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» вĕренме вулав ҫуртне колхозниксемпе колхозницăсем йышлăн пухăнаҫҫĕ. Суйлав законне ăнлантарас тĕлĕшпе 10 агитатор ĕҫлет. Вĕсем стена хаҫачĕсем, «Боевой листоксем» кăлараҫҫĕ. Кунта кăҫал пурĕ 15 номер стена хаҫачĕ кăларнă.

М. ЕГОРОВ.

КОЛХОЗНИКСЕМ РАДИОПРИЕМНИКСЕМ ЛАРТАҪҪĔ

ИШЛЕЙ. Салапайкасси ял Советĕнчи «Агроном» колхозра Хĕрлĕ Ҫартан аманса таврăннă колхозник И. Гаврилов юлташ, ҫавăн пекех Кипечкасси ял Советĕнчи «Большевик» колхозри комсомолец Сергей Пайманов юлташ хăйсен килĕсĕнче икĕ лампăллă радиоприемниксем лартнă. Халĕ ĕнтĕ вĕсем тĕнчери хыпарсене вăхăтра пĕлсе пыраҫҫĕ. Хăйсем илтнине вĕсем колхозниксене каласа параҫҫĕ.

ШКУЛ АЧИСЕНЕ ПУЛĂШАҪҪĔ

ВĂРНАР. Ҫĕнĕ Мĕлĕшри Молотов ячĕпе тăракан колхоз Мĕлĕшри 7 ҫул вĕренмелли шкула кăҫал 48 килограмм ҫăм парса пулăшнă. Ку ҫăмран вăрҫă инвалидĕсен тата Хĕрлĕ Ҫартан таврăннă воинсен ачисене валли ăшă япаласем хатĕрлеҫҫĕ.

ВЦСПС-ăн XIV-мĕш пленумĕ

Декабрĕн 3-мĕшĕнче ВЦСПС-ăн XIV-мĕш пленумĕ уҫăлнă. ВЦСПС председателĕ В. В. Кузнецов юлташ хăйĕн пленума уҫнă чух каланă сăмахĕнче профсоюзсен хуҫалăха мирлĕ аталантарса пынă условисенчи тĕп задачисене кăтартса панă.

Пленум ҫакăн пек кун йĕркине ҫирĕплетнĕ: профсоюзсем СССР Верховный Совечĕн суйлавне хутшăнса ĕҫлесси; рабочисемпе служащисен кулленхи нушисене тивĕҫтерес тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсен ĕҫне лайăхлатасси; рабочисемпе служащисене сыватас тата кантарас тĕлĕшпе профсоюзсен ĕҫне лайăхлатасси; профсоюзсен культурăллă-массăллă ĕҫне лайăхлатасси; пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен Парижра пулса иртнĕ конгресĕн итогĕсем ҫинчен.

Кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтупа ВЦСПС секретарĕ Н. Л. Соловьев юлташ доклад туса панă. Доклад тăрăх прениссем пуҫланса кайнă.

Иккĕмĕш ыйтупа—рабочисемпе служащисен кулленхи нушисене тивĕҫтерес тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсен ĕҫне лайăхлатасси ҫинчен—ВЦСПС секретарĕ В. В. Кузнецов юлташ доклад туса панă.

* * *

Декабрĕн 3-мĕшĕнче каҫхине ВЦСПС-ăн XIV-мĕш пленумĕнче ВЦСПС секретарĕ Л. М. Соловьев юлташ «Профсоюзсем СССР Верховный Совечĕн суйлавне хутшăнса ĕҫлесси ҫинчен» доклад туса панă.

Докладчик ҫакна палăртнă: профсоюзсен темиҫе пин деятелĕпе активистне Союз Советне тата Национальноҫсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен комиссисенче ĕҫлеме уйăрса лартнă.

Ҫитес суйлав ячĕпе сарăлса кайнă социализмлă ăмăрту ҫинчен Соловьев юлташ ҫапла каланă: профсоюзсен ĕҫри ҫав ҫĕкленĕве ертсе пымалла, ăна кăҫалхи производство планĕсене ăнăҫлăн тултарас тата ирттерсе туларас ҫулпа, кулленхи кирлĕ таварсем ытларах туса кăларас, промышленность продукцийĕн пахалăхне лайăхлатас тата унăн хăйне ларакан хакне чакарас ҫулпа ямалла, тенĕ.

Унтан ВЦСПС председателĕ В. В. Кузнецов юлташ «Рабочисемпе служащисен кулленхи нушисене тивĕҫтерес тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсен ĕҫĕсене лайăхлатасси ҫинчен» доклад туса панă.

Мирлĕ тапхăра куҫнă май пирĕн ҫĕршыв умне тухса тăнă задачăсем ҫинчен каланă хыҫҫăн докладчик профсоюзсен ҫĕнĕ условири ĕҫĕсем ҫинчен тĕплĕн каласа панă. Хальхи вăхăтра ĕҫҫыннисен пурнăҫ шайне ӳстермелли майсем ĕлĕкхинчен нумай ытларах пур. Профорганизацисен задачи—ҫав майсемпе вăйлăрах усă курма, рабочисемпе служащисен кулленхи нушисене тивĕҫтерме тăрăшасси пулать.

Кузнецов юлташ пурăнмалли ҫуртсем тумалли плана пурнăҫа кĕртни питĕ пахă ĕҫ пулса тăни ҫинчен калать. Ҫак ĕҫ валли уйăрса панă 3,2 миллиард тенкĕ укҫапа начар усă кураҫҫĕ. Строительство материалĕсем тăвакан промышленность та кая юлса пырать. Туса лартнă ҫĕнĕ ҫуртсене лайăх тесе калама ҫук. Профсоюз организацийĕсен представителĕсен, ҫĕнĕ ҫуртсене е юсанă ҫуртсене йышăннă чух, тӳрлетмелли ҫуртсенĕ йышăнма ирĕк памалла мар.

Кузнецов юлташ рабочисемпе служащисене коммунальнăй предприятисем — мунчасем, прачечнăйсем, парикмахерскисем—начар пулăшни ҫинчен, куллен кирлĕ япаласене юсамалли мастерскойсен хисепне ӳстермелли ҫинчен тата вĕсене квалификациллĕ работниксем туса памалли ҫинчен калать.

Кузнецов юлташ рабочи снабженийĕн ыйтăвĕсем ҫинчен, столовăйсен, буфетсен, магазинсен ĕҫĕ ҫинчен нумай калать. Пĕрлешсе апатланмалли хăшпĕр предприятисенче ĕҫ лайăх пырать. Анчах начар ĕҫлекен столовăйсемпе магазинсем те пур. Хальхи вăхăтра ҫав предприятисене общество енчен профсоюзсен 600.000 активисчĕ ытла контроллесе тăраҫҫĕ. Профсоюзсен Цетральный Комитечĕсен ҫав активистсене ĕҫре пур майпа та пулăшмалла, пĕрлешсе апатланмалли предприятисен продукцийĕн пахалăхне лайăхлатассишĕн, унăн хакне чакарассишĕн кĕрешмелле.

Рабочисемпе служащисене апат-ҫимĕҫ продукчĕсем парас ĕҫре подсобнăй хуҫалăхсем пысăк вырăн йышăнса тăраҫҫĕ. Вĕсем кăҫал пахчаҫимĕҫ лартнă лаптăка ӳстернĕ. Пахчаҫимĕҫ ытларах туса илнĕ, ĕнесен, сыснасен, сурăхсен, качакасен, кайăк-кĕшĕкĕн хисепне ӳстернĕ.

— Подсобнăй хуҫалăхсене пур майпа та, аталантармалла,—тет докладчик. — Ҫав хуҫалăхсенче туса илнĕ продуктсене расходлас ĕҫре йĕрке туса хумалла, вĕсемпе пуринчен малтан сыватмалли апат ҫитерес ĕҫре, йывăр ҫын пулнă хĕрарăмсемпе ача ĕмĕртекен хĕрарăмсене апат хушса парас ĕҫре, ҫамрăк рабочисен апатне лайăхлатас ĕҫре, хăйсен нормисене ирттерсе тултаракан рабочисене тата инженерсемпе техниксене апат-ҫимĕҫ хушса парас ĕҫре усă курмалла.

Уйрăм пахчасемпе коллективлă пахчасенче пахчаҫимĕҫ лартса ӳстерес ĕҫ тата ытларах сарăлчĕ. 18 миллион ытла рабочипе служащи 1,5 миллион гектар пахчаҫимĕҫ лартса ӳстернĕ. Профорганизацисен пахчаҫимĕҫ лартса ӳстерес ĕҫе тата ытларах сарма тăрăшмалла, ҫырласем, сад йывăҫҫисем лартса ӳстерекен, кашни хăй патĕнче выльăх-чĕрлĕх ӳстерекен ĕҫҫыннисен пуҫарăвне ырласа йышăнмалла тата пулăшмалла.

Малалла Кузнецов юлташ рабочисемпе служащисене пурнăҫпа йăла условийĕсене лайăхлатас ĕҫре социальнăй страховани мĕн тери паха пулни ҫинчен калать. Социальнăй страховани бюджечĕ кăҫал 1940 ҫулхинчен 1,5 миллиард тенкĕ ытларах.

Ача амăшĕсене памалли пособисене тата ачасене пăхма каякан расходсене ӳстернĕ. Ҫуллахи лагерьсемпе сызатмалли площадкăсенче кăҫал 1.675 пин ача пулнă, пĕлтĕр 1.200 пин пулнăччĕ. Кану ҫурчĕсемпе санаторисен хисепне те ӳстернĕ.

Юлашкинчен докладчик мирлĕ вăхăтра профорганизацисем ĕҫ кунĕн тăршшĕне, рабочисемпе служащисене отпуск панине тата ĕҫ сыхлавне контроллесе тăни пысăк ĕҫ пулни ҫинчен калать. Ĕҫ тухăҫлăхне ӳстерсе пыма кансĕрлекен чăрмавсене пĕтерме тăрăшмалла.

Кузнецов юлташ ҫапла калать: профсоюзсен ĕҫҫыннисен жалобисене чĕрене хурса тимлĕн пăхмалла, рабочисемпе служащисен ĕҫ условийĕсене тата пурнăҫпа йăла условийĕсене лайăхлатмашкăн мĕн тума пуррине пурне те тумалла. Отечественнăй вăрҫă инвалидĕсемшĕн тата Тăван ҫĕршыва хӳтĕленĕ ҫынсен ҫемьисемшĕн уйрăмах хытă тăрăшмалла. (ТАСС).

СССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫакăн ҫинчен хурланса пĕлтерет: 1945-мĕш ҫулхи декабрĕн 5-мĕшĕнче йывăр чирлесе выртнă хыҫҫăн, питех те паллă вырăс ученăйĕ-ботаникĕ, СССР Верховный Совет депутачĕ, Социализмлă Ĕҫ Геройĕ, академик Владимир Леонтьевич **Комаров** вилнĕ, вăл 77 ҫулта пулнă.

СССР Совнаркомĕнче

Питех те паллă вырăс ученăйĕн-ботаникĕн В. Л. Комаров академикăн ятне ĕмĕрлĕхе палăртса хăварасси ҫинчен тата унăн ҫемьине пулăшу парасси ҫинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫапла йышăннă:

1. Докторантсене В. Л. Комаров академик ячĕпе уйăхне 1.300 тенкĕ, аспирантсене уйăхне 800 тенкĕ стипенди памалла тунă. Ҫав стипендисене СССР Наука академийĕн В. Л. Комаров ячĕпе тăракан ботаника институтĕнче тата СССР Наука академийĕн тĕп ботаника садĕнче—икшер докторанта тата икшер аспиранта, СССР Наука академийĕн естествознани историйĕн институтĕнче — пĕр докторанта тата пĕр аспиранта тӳлесе тăмалла.

2. Ленинградри тата Мускаври государство университечĕсен биологи факультечĕсенче ботаник-аспирантсем валли В. Л. Комаров ячĕпе уйăхне 800-шер тенкĕ тӳлемелли икшер стипенди тунă.

3. СССР Наука академине 1946—1948-мĕш ҫулсем хушшинче В. Л. Комаров академикăн сочиненийĕсен пуххипе пичетлесе кăларма хушнă.

4. Ленинград хулинче В. Л. Комаров ячĕпе тăракан ботаника институчĕн ҫурчĕ ҫумне (Попов профессор урамĕ, 2-мĕш ҫурт; ҫав институтра В. Л. Комаров нумай ҫул хушши директор пулса ĕҫленĕ) тата Мускав хулинче СССР Наука академийĕн Биологи наукисен отделенийĕ ҫурчĕ ҫумне (Аслă Калуга урамĕ, 33 мĕш ҫурт; В. Л. Комаров ҫав отделенире нумайччен академик-секретарь тата член пулса ĕҫленĕ) мемориальнăй хăмасем ҫапса хума йышăннă.

5. В. Л. Комаров арăмне Надежда Викторовна Комаровăна СССР Совнаркомĕн 1943-мĕш ҫулхи декабрĕн 28-мĕшĕнче йышăннă 1435-мĕш номер постановленийĕ тăрăх пенси парса тăма тата ăна 70 пин тенкĕ укҫа парса пулăшма йышăннă.

6. В. Л. Комаров академикĕн йăмăкне Елизавета Павловна Кухарскаяна — В. Л. Комаров академик пулăшнипе пурăннăскерне, мĕн виличченех уйăхне 700 тенкĕ пенси парса тăмалла тата ăна 30 пин тенкĕ укҫа парса пулăшмалла.

7. В. Л. Комаров [illegible]ника государство шутĕнчен пытармалла.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ЛЕТОПИÇĔНЧЕН

МУСКАВ ПАТĔНЧИ АСЛĂ ÇАПĂÇУ

Тăвата çул каярах—1941 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче—Сталин юлташăн приказĕ тăрăх Хĕрлĕ Çар контрнаступленин пуçласа ярса Мускав патне сывхарса çитнĕ нимĕçсене аркатса тăкрĕ.

Мускав патĕнчи аслă çапăçу вăрçăн малтанхи çулĕнчи чи пысăк çапăçу пулчĕ. Вăл 1941 çулхи кампание пире майлă çавăрчĕ. Вăрçăри çак татăклă событие ют çĕршыв обозревателĕсем «Мускав сывăхĕнчи тĕлĕнмелле янала» тесе ят панă.

Çак çĕнтерӳ умĕн пирĕн Хĕрлĕ Çар вăйлă та чее тăшмана хирĕç чылай вăхăт хушши вăйлăн çапăçрĕ. Çав çапăçусенче Хĕрлĕ Çар паттăрлăхпа хăюллăхăн çав тери лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕ, унăн руководителĕсем вара стратеги искусствин мастерлăхне кăтартса пачĕç.

Мускава тытса илмелли план фашистла Германин ССР Союзне хирĕç çисĕм пек хăвăрт вăрçмалли пĕтĕмĕшле планăн уйрăлми пайĕ пулса тăнă. Хăйĕн стратегиллĕ шухăшĕсенче Германи командованийĕ совет столицине тытса илесси татăклă вырăн йышăнса тăрать тесе палăртнă. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах нимĕçсем Мускав патне пыма хавхаланнă. Вĕсене унăн пуянлăхĕ çеç мар, вăл пирĕн промышленноçăн пысăк центрĕ тата чугун çулсен паха узелĕ пулни çеç мар илĕртсе тăнă. Мускав вăл —СССР столици, Совет çĕршывĕн чĕри. Ăна тытса илсе фашистла авантюристсем Совет правительствине парăнтарма ĕмĕтленнĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ хăйсем пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăрах, гитлеровецсем çав-çавах Мускав патнелле тапаçланнă, Мускав таврашне хӳтĕлекен Хĕрлĕ Çар хирĕç тăнине кирек епле пулсан та çапса хуçма тăрăшнă.

Октябрĕн 19-мĕшĕнче Мускавра Оборонăн Государственный Комитечĕн постановленине пичетлесе кăларнă. Çав постановление Сталин юлташ алă пуснă. Хулара тăшман çавăрса илнĕ чухнехи пек лару-тăру туса хунă. Хăш вырăнта оборона пулмалли чиксĕсене кăтартса панă. Мускав ĕçсыннийĕсене паттăрла оборона ĕçне хутшăнма, Хĕрлĕ Çар чаçĕсене пур майпа та пулăшма, провокаторсене, шпионсене тата тăшманăн ытти тĕрлĕ агенчĕсене нимĕн хĕрхенӳсĕр пĕтерсе пыма чĕнсе каланă.

Мускав ĕçсыннийĕсем оборона сооруженийĕсем тунă. Сталин юлташ Мускавра пулни, кĕрешĕве вăл лăпкăн та шанчăклăн ертсе пыни боецсемпе Мускав çыннисене хавхалантарнă. Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕçсыннисем Мускав çинчен шутланă, Мускава пулăшма васканă.

* * *

1941 çулхи октябрь уйăхĕнче Мускава тытса илес тесе пуçласа янă пĕрремĕш наступлени нимĕçсене хăйсем шухăшланă пек ăнăçусем паман. Тăшманăн Совет столицин аякри вырăнĕсем патне çеç пырса тухма май килнĕ. Çакăнта вара нимĕç çарĕсене малалла куçса пырассине чарса лартнă. Пирĕн çарсем, тăшмана çав тери пысăк çухатусем кӳрсе, оборонăн çĕнĕ чиккисенче вырнаçнă. Çав чикĕ Волоколамскран, Можайскран, Малоярославецран, Калугăран хĕвелтухăçнерех тата Тулăран хĕвеланăçнерех пулнă.

Нимĕçсем хăйсен тылĕнчен çĕнĕ чаçсем илсе килнĕ, хăйсен вăйĕсене çĕнĕлле йĕркеленĕ те ноябрĕн 16-мĕшĕнче Мускав çине иккĕмĕш аслă наступлени пуçласа янă. Тăшман кунта çав тери пысăк вăй—51 дивизи, вăл шутра 13 танковăй тата 5 моторизованнăй дивизи пухса тăратнă. Наступление питĕ вăйлă авиаци пулăшса пынă.

Нимĕç командованийĕн шухăшĕ тăрăх, çак иккĕмĕш наступлени октябрь уйăхĕнчи плана малалла аталантарни пулнă. Нимĕçсем Мускав çине виçĕ енчен тапăнса пынă. Танковăй çарсен флангсенчен пырса çапса Мускава çавăрса илмелле пулнă. Центрта вара пехота корпусĕсем наступлени туса пынă. Нимĕçсем Мускав çывăхĕнче мотомеханизацийĕ çав тери пысăк «Канны» туса хума шутланă.

Хĕвеланăç фронтĕнчи пирĕн çарсем арми генералĕ, халĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков юлташ ертсе пынипе тăшмана çав тери хаяррăн хирĕç тăнă, анчах та хисеп тĕлĕшĕнчен те, техника тĕлĕшĕнчен те пысăкрах вăй хĕснине пула, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем гитлеровецсене пысăк çухатусем кӳрсе пĕр оборона чиккинчен тепĕр оборона чикки патне чакса пынă.

Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан çарсен сывăхри тылĕнче Мускав пулнă. Совет столици нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе активлăн хутшăннă, вăл фронта сынсем, техника ярса тăнă, хăйĕн мĕнпур хăватлă организацийĕне пулăшнă. Сивве, йĕпе-сапана пăхмасăрах хĕрарăмсем, стариксем, çамрăксем окопсем, танксене тытса чармалли шăтăксем чавнă, тăшмана тытса чармалли вырăнсем тунă. тăван хула йĕри-тавра оборонăн хăватлă сооруженийĕсене тăва-тăва лартнă. Сывлăшран тапăннине хирĕç кĕрешекен çар тата Мускав çыннисем фашистсен авиацийĕ тапăннине сире-сире янă. Çав тапăннисен юлашкийĕсене хăвăрт пĕтерсе пынă.

Мускавăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче, Клин сывăхĕнче тата Солнечногорск районĕнче, ноябрĕн 20—24-мĕшĕсенче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Кăнтăр-тарахра, Истра хулипе Истра шывпуххи районĕнче, пирĕн çарсем çав тери хаяррăн хирĕç тăнă (ноябрĕн 21—27-мĕшĕсенче).

Декабрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче çапăçусем Мускав сывăхĕнчех пуçланса кайнă. Тăшман Мускав—Атăл каналĕ хĕррине, Красная Поляна—Крюково хушшине тата Звенигородран çурçĕртерехри вырăна пырса тухнă. Çурçĕр-хĕвеланăç енчен нимĕçсем Мускавран 25 километр çеç аяккарахра пулнă.

Нимĕçсен танковăй 2-мĕш çарĕ, Гудериан ертсе пынипе, икĕ пехота корпусĕ хушса панипе вăйлатнăскер, хăвăрттăн пырса çапса Тула хулине тытса илме хăтланнă. Анчах та Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тата Тулăри хĕçпăшалланнă рабочисем хулана хӳтĕлесе хăварнă. Тăшман фронтран кĕтмен çĕртен пырса çапса пирĕн хĕçпăшал туса хатĕрлекен авалхи хулана тытса илме пултарайман. Нимĕçсем тавралла кайса çурçĕр-хĕвеланăçĕнчен, Алексин районĕнчен, пырса хулана тытса илме хăтланнине те сирсе пăрахнă. Вара Гудериан, хăйĕн ĕçĕсем ăнăçсăр пулса пынине кура, Тулăна кăнтăр-хĕвелтухăç енчен çавăрса илме шутланă. Вăл Сталиногорска тытса илнĕ, Венев районне пырса тухнă, хăйĕн танк соединенийĕсене Тула тылне кăларса тăратнă. Унăн хăшпĕр чаçĕсем Каширăпа Рязань еннелле кайнă.

Центрта нимĕçсем хăйсен пехота ушкăнне атакăна кĕртсе яма вăхăт çитнĕ тесе шутласа, декабрĕн 1-мĕшĕнче Наро-Фоминскран çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра наступлени пуçласа янă.

Анчах та чи хăрушă кунсенче те Совет столицине хӳтĕлекенсем хăраса ӳкмен, хăйсен вăйĕсене шанса тăма пăрахман. Вĕсем Сталин юлташ Мускавра пулнине пĕлнĕ, вĕсем Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче тухса каланине итленĕ. Вĕсем татăклă çĕнтерӳ тăвассине чун-чĕререн сталинла ĕненсе тăнă.

Мускав патĕнче хаяр çапăçусем хĕрӳленсе пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандованийĕ хăйĕн гениллĕ контр-маневрне пурнăçа кĕртсе пынă. Сталинăн нимĕçсене аркатса тăкмалли планĕнче Мускав сывăхĕнче пысăк резервсем пухса тăратма, вĕсене пирĕн флангсен икĕ енне, танксен унки тулашне вырнаçтарма палăртнă. Çав танксемпе тăшман столицăна тытса илме шутланă. Пĕр лайăх самантра çак резервсен вара (çĕнĕ çарсен тата çар соединенийĕсемпе боевой техникăн), фронтра çапăçакан чаçĕсемпе пĕрле кĕтмен çĕртен наступлени пуçласа ярса сĕмсĕрленсе кайнă тăшмана хăватлăн пырса çапмалла пулнă. Çакă ĕнтĕ пирĕн Верховный Главнокомандующин аслă та хăюллă планĕ пулнă. Сталин юлташăн шухăшĕпе планне Хĕвеланăç фронтĕнче Жуков юлташ ертсе пынипе пирĕн çарсем питĕ ăнăçлă пурнăçа кĕртнĕ.

Декабрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче Хĕвеланăç фронтĕнчи çар Верховный Главнокомандованирен резервсем илсе вăйланнă. Вăл халĕ нумай вăхăт хушши çапăçнипе вăйсăрланнă нимĕç çарĕсенчен вăйлăрах пулнă. Гитлерла командовани, хăйĕн дивизийĕсене пĕр йĕре тăратса, нимĕне пăхмасăр малалла хăваланă, вĕсен Мускава тытса илнĕ чухне пулма пултаракан юлашки çапăçура вăрçа кĕртсе яма резерв та пулман. Нимĕçсен флангсенчен пырса çапмалли икĕ ушкăнĕ те пирĕн çарсем тăракан вырăна шала шăтарса кĕнĕ, çапла вĕсене вара совет çарĕсем часах çавăрса илнĕ.

Декабрĕн 6-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Сталин юлташ приказĕ тăрăх нимĕçсен флангсенчи ушкăнне хирĕç татăклă наступлени пуçласа янă. Совет çарĕсем нимĕçсен шăтарса кĕнĕ чаçĕсене пур енчен те атакăланă.

Пуçланса кайнă çапăçусенче тăшман хирĕç тăнине çапса хуçнă, вара тăшман, çав тери пысăк çухатусем туса, каялла чакма тытăннă.

Пирĕн чаçсем часах Клин хулине çавăрса илнĕ те нимĕçсен тылне пырса тухнă. Клинпа Волоколамск хушшинчи çул çинче нимĕçсен чакакан çарĕсен колонисем, автомашинисемпе обозĕсем капланса ларнă. Фашистсен чаçĕсене пирĕн авиаци пыра-пыра çапса çав тери пысăк çухатусем кӳнĕ.

Чакса пыракан тăшмана Хĕрлĕ Çар вăйлăрах та вăйлăрах пыра-пыра çапнă, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе тăкнă, нумай салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна илнĕ. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем çав тери мĕскĕнĕн курăннă. Вĕсем çуллахи тумпа пулнă, вĕсене тăм илсе пĕтернĕ, вĕсем пит-куçне тутăрпа е хĕрарăм кĕпипе чăркаса лартнă. Çав япаласене вĕсем вырăнти халăхран çаратса илнĕ. Вĕсен ирсĕрлĕхĕ çамăлла пăтратнă. Мускав пуянлăхĕсене тытса илме ĕмĕтленнĕ фашистла çарату çарĕ 1941 çулхи декабрь уйăхĕнче питĕ лайăх ăс-тăн илчĕ!

Хĕвеланăç фрончĕн кăнтăр пайĕнче Тулăпа Михайлов хушшинче Гудериана хĕссе лартнă; çурçĕр енчен ăна гвардеецсен пĕрремĕш кавалери корпусĕ атакăланă. Гудериан вара машинăсене çунтарса ярса хăвăрттăн каялла чакма приказ панă. Тăшмана хăваласа пынă май, совет çарĕсем ăна çавăра-çавăра илсе пыра-пыра çапнă. Событисем çав тери хăвăрт аталанса пынă. Гудериан хăйĕн штабĕпе пĕрле кăшт çеç тыткăна лекмен.

Пĕтĕм фронт тăршшĕпех аркатса тăкнă нимĕç çарĕсене сывлăш çавăрма памасăр хыçран хăваласа пынă. Пирĕн çарсен сылтăм пайĕ Ламăпа Руза шывĕсен çыранне пырса тухнă. Кăнтăрта пирĕн чаçсем декабрь уйăхĕн вĕçĕ тĕлнелле Калугăпа Белев хушшинче Ока урлă каçса тăшман йышăннă территорие чылай шала кĕрсе кайнă.

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн çарсем контрнаступлени вăхăтĕнче 1941 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче нимĕçсенне 1.098 танк, 1.434 тупă, 1.615 пулемет, 12.233 автомашина тата ытти тĕрлĕ нумай çар пурлăхĕ тытса илнĕ. Нимĕçсен вилнĕ, аманнă тата тăм илнипе пĕтнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем çĕршер пин шутланнă. Хăйсен çарне Мускав патĕнче аркатса тăкнине тата ун хыççăнхи 1941—1942 çулхи хĕллехи операцисене нимĕçсем ĕмĕрсем хушши асра тытĕç!

Мускав патĕнчи çĕнтерӳн политикăпа стратеги тĕлĕшĕнчи пĕлтерĕшĕ çав тери пысăк. 1941 çулхи кампанире улшăну пулчĕ: вăрçăри пуçарулăх пирĕн алла куçрĕ. Хĕрлĕ Çар оборонăран наступление куçрĕ. Гитлеровецсен «çисĕм пек хăвăрт вăрçи» путланса ларчĕ. Нимĕç çарне «никам та çĕнтереймест» текен юмаха татăклăнах суяна кăларнă. Çакăн хыççăн пирĕн çар гитлеровецсене темиçе хут та хăватлăн пыра-пыра çапрĕ. Мускава тăшман кĕретĕнех хăратса тăнине сирсе пăрахнă. 1941—42 çулхи хаяр хĕлре Хĕрлĕ Çар, малалла наступлени туса пырса, нимĕçсен çарне хăшпĕр вырăнта 400 километр таран хĕвеланăçнелле хăваласа янă.

* * *

Хĕрлĕ Çар чакса пынă хыççăн татăклă контрнаступлени пуçласа яни чи йывăр та кăткăс операци пулса тăрать. Вăрçăри ĕçсем мĕнле пынине кашни самантрах пĕлсе тăмалла, оборонăран контрнаступление куçмалли вăхăта суйласа илме пĕлмелле. Вăрçă историйĕ пире çакна кăтартса парать: хăюллă та çирĕп çар тата пысăк полководецсем çеç çавăн пек хăвăрт улшăнусем туса лару-тăрăва хăйсене майлă çавăрма тата сĕмсĕр тăшмана аркатса тăкма пултараççĕ. Пирĕн Верховный Главнокомандующин аслă шухăш-кăмалĕ, искусстви тата стратегиллĕ ăслăлăхĕ, пĕтĕм Совет халăхĕ çĕнтерӳ тума тăрăшни, пирĕн воинсем çав тери паттăррăн та хăюллăн çапăçни Отечественнăй вăрçăн малтанхи çулĕнчи çак паха çапăçура пуçарулăха хамăрăн алла илме май пачĕç.

Мускав патĕнчи аслă çапăçу Совет государствин вăйне, совет стройĕн çирĕплĕхне, вăл çĕршывăн мĕнпур хăватлăхне, халăхăн пĕтĕм вăйне тăшмана татăклăн аркатса тăкма организацилеме пултарнине пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕ. Хĕрлĕ Çар 1941 çулта Мускав патĕнче тунă çĕнтерӳ пĕрремĕш аслă çĕнтерӳ пулнă. Ун хыççăн вара Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса вăрçăри ĕçсене тĕпренех тепĕр майлă çавăрчĕ. Совет Союзĕпе унăн союзникĕсем тăшмана вĕсĕмренех аркатса пырса, фашистла Германие пĕтерсе тăкрĕç те ăна пĕр сăмахсăрах парăнтарчĕç. Социализмлă государствăн тата унăн хĕçпăшаллă вăйĕсен хăватлăхне пĕтĕм тĕнче курчĕ.

«... Октябрьти революци тунă государство фашистсем тапăннинчен хăйне хӳтĕлесе хăварма çеç мар, тата фашизмпа агрессин тĕп вучахне пĕтерес тесе, наступлени пуçласа яма та пултарчĕ... Совет государстви хăйне хăй чыслăн хӳтĕлеме пултарни тата çĕршыв историйĕнче пулнă чи йывăр тĕрĕслевсене те чăтма пултарни кĕретĕнех курăнса тăракан пулчĕ» (Молотов).

Паян эпир Хĕрлĕ Çар тата мĕнпур совет халăхĕ Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче аслă Сталин ертсе пынипе утса тухнă йывăр та мухтавлă çул çине тивĕçлипех мухтанса каялла çавранса пăхатпăр. Эпир Мускав патĕнчи мухтавлă çапăçăва уйрăмах лайăх астăватпăр. Çак çапăçура халăхăн патриотизмĕ, Хĕрлĕ Çарăн хăюлăхĕ тата çулпуçĕн генилĕхĕ Совет столицине хӳтĕлесе хăварса тăшмана аркатмали çула хатĕрлесе пачĕç.

Генерал-лейтенант Е. ШИЛОВСКИЙ.

Çар сыннисен çемьисене пулăшаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Районри чылай колхозсем çар сыннисен çемьисене пулăшу парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсене çĕршер пăт тырă тата ытти апат-çимĕç, выльăх-чĕрлĕх парса пулăшнă, 20 çемьене пӳрт-çурт юсаса панă.

Ишекассинчи «Комбайн» колхоз 7 çемьене ĕне-выльăх, 12 çемьепе сурăх, 10 çемьене сысна панă. Тăлăха юлнă ачасене çипуç туянтарнă. Чемейри «Сеятель» колхоз 6 çемьене ĕне илсе панă. Çапла вара ку ялта кашни колхозникĕн ĕне пур. Этменри «Красный Октябрь», Анат Санаăти «Новый путь» колхозсем те çар сыннисен чылай çемьисене выльăх-чĕрлĕх туянтарнă. Кĕçĕн Чурашри «Броневик» колхоз выльăх-чĕрлĕх парса пулăшнипе пĕрлех 4 çемьене çуртсем юсаса панă.

Мăн Чурашри «Прогресс» колхоз уйрăмах тăлăха юлнă ачасемшĕн хытă тăрăшать. Шкула йĕркеллĕ çӳретчĕр тесе, 14 ачана çăматă, 4 ачана тумтир илсе панă. Шкулта 103 ачана кунне пĕрер хут вĕри апат çитереççĕ. Çавăн пекех Килтĕшри çичĕ çул вĕренмелли шкулта та çар çыннисен ачисене вĕри апат çитереççĕ.

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

Декабрĕн 3-мĕшĕнчи каçхи лару

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Паян пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕн каçхи ларăвĕнче Америка айăплаканĕ Олдермен гитлеровецсем Чехословакие тапăнма хатĕрленни çинчен малалла каланă. Вăл трибунала Мюнхенри договора аса илтернĕ. Мюнхенра 1938 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче Пĕрлешӳллĕ Королевствăпа Франци Судет облаçне Германие парасси çинчен Германипе тата Италипе килĕшӳ туначчĕ.

Мюнхенри договора тата ун хыççăн пулнă пĕтĕм тĕнчери кризиса тĕнче нихăçан та манмĕ,—тет Олдермен. Олдермен çакна палăртса парать: çав килĕшĕве аса илнĕ чухне вăрçăн мĕнпур хăрушлăхĕсем тепĕр хут куç умне килсе тухаççĕ. Гитлеровецсем Мюнхенри килĕшӳпе Чехословакие тапăнас ĕçре усă курнă. Мюнхенри килĕшӳ çине алă пусса, гитлерла каварлашуçăсем Чехословакие тапăнмалли план хатĕрленĕ. Олдермен трибунала гитлеровецсем çырнă документа парать. 1938 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче Иодль генерал хăйĕн дневникĕнче Чехословакие тапăнмалли план çинчен тĕплĕн çырса хунă. Вăл çарпа флотăн пĕр-пĕрине килĕштерсе тапăнмалли çинчен çырнă. Çар тул çуталаспа тапăнма пултарать, тесе çырнă Иодль, анчах çанталăк авиацие темиçе сехетлĕх чарса лартма пултарать. Иодль 6 сехет те 15 минутра атакăлама сĕннĕ (мĕнле кун тапăнмаллине кăтартман) çарăн сывлăш-çар вăйĕсем çапăçма пуçлассине кĕтмесĕрех тапăнмалла, сывлăш-çар вăйĕсем хăйсемшĕн меллĕ вăхăтра çапăçма пуçлама пултараççĕ, тенĕ.

Çав кунах, сентябрĕн 27-мĕшĕнче, Кейтель Гесспа Гиммлера меморандум янă. Çав меморандумра вăл, Чехословакие планра кăтартнă тăрăх тапăнма пултăр тесе, Гитлер мĕнпур вăйсене, çав шутра гитлерла партин организацийĕсене те мобилизацилеме хушни çинчен пĕлтернĕ...

Айăплакан çак документа, гитлеровецсем ултавлăн тапăннине кăтартакан тепĕр документ вырăнне хурса, трибунала панă.

Айăплакан тăратнă документсенчен çакă курăнать: сентябрĕн 30-мĕшĕнче татăклă наступлени пуçламашкăн Гитлер чикĕ патне пĕрремĕш эшелона илсе пыма хушнă. Гитлерла каварлашуçăсем Чехословакие тапăнма юлашки хут пур енчен те тĕплĕн хатĕрленнĕ. Дрезденри Бреслаури тата Венари радиостанцисене сутĕçпе пропаганда министерстви аллине панă. Геббельса Чехословакири радиостанцисене ĕçлеме кансĕрлеме хушнă.

Çапла ĕнтĕ, нацистсен çарĕсем Чехословаки чикки патне пырса тăнă, вĕсем тапăнма хатĕр пулнă. Анчах çар Чехословакие хирĕç хăй пĕччен тухман. Çар тапăниччен малтан пĕр кампание питĕ лайăх туса ирттернĕ, вăл кампани—гражданла халăха Чехословаки правительствине пăхăнми тăвасси пулнă. Чехословаксем хирĕç тăма ан пултарччăр тесе, нацистсем нумай вăхăт хушши укçапа, пропагандăпа тата вăйпа усă курнă.

Малалла Олдермен трибунала Чехословаки правительствин «нимĕçсем Чехословакие хирĕç тунă преступлени» ятлă официальнăй документне парать.

Олдермен, айăплакан материалсене пĕрле илсе пăхса, çапла калать: гитлеровецсем Чехословакире гитлерла парти туса хунă хыççăнах сăтăрла ĕçсем тума пуçланă. 1938 çулта Судетри гитлеровецсен руководителĕсем Германири гитлеровецсен программин 21 пунктне йышăннă. Вĕсем Чехословакие хирĕç усçăнах ĕçлеме шутланă. Вĕсене вара суд тунă. 1933 çулта Чехословакири гитлеровецсен руководителĕсем хăйсен партине салатса яни çинчен пĕлтернĕ, хăйсем Германие тарнă. Анчах та çакă ыттисене ултални çеç пулнă. Гитлеровецсем Чехословакире вăрттăн ĕçлесе пурăннă. 1934 çулта спорт инструкторĕ Генлейн Германин «хеймaтфронтне» туса хунă. Гитлеровецсен сăтăрла ĕçĕсем вăйлăланса пынă. Анчах Генлейн хăй Германири гитлеровецсемпе çыхăнса тăнине тунна, эпир Чехословаки правительствине пăхăнса тăратпăр, тенĕ. Çапла шантарса калани нимĕ те тăманнине ун хыççăнхи ĕçсем кăтартса панă. Виçĕ çул иртсен, Генлейн тата унпа пĕрле ĕçлекенсем Судет облаçне тулли автономи пама ыйтнă. Вĕсем государство ăшĕнче тепĕр государство туса хурасшăн пулнă. Тепĕр çултан Чехословакири гитлеровецсем тата ытларах хăюлланса кайнă. Вĕсем гитлерла пиллĕкмĕш колонна меслечĕсемпе ĕçлеме пуçланă. Терропа шпионаж вăйлăланса пынă, гитлеровецсем Судет облаçĕнчи халăхăн мĕнпур пурнăçне, уйрăмах та тĕрлĕ фирмăсене, ытларах та ытларах кĕме пуçланă. Генлейновецсем банксемпе фирмăсен директорĕсене хăйсен енне çавăрма тăрăшнă, çав вăхăтрах вĕсем Германи чиновникĕсемпе çыхăнса тăнă. Гитлеровецсем тĕрлĕ хирĕçӳллĕ ĕçсем тунă. Вĕсем радиопа сиенлĕ пропаганда туса пынă, «Чехословаки—большевизм йăви», тенĕ, Чехословаки пăтранса тăтăр, тесе, вĕсем укçа та, хĕçпăшал та шеллесе тăман. Чехсене Германие илсе кайма гестапо чикĕ урлă каçнă. Çав сăтăрла ĕçе Германин Прагăри посольстви ертсе пынă. Германин Прагăри посолĕ 1938 çулхи мартăн 16-мĕшĕнче Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине янă телеграмма çакна лайăх кăтартса парать: Генлейн юхăмĕ вăл Германири вăрттăн ĕçлекен гитлеровецсен инструменчĕ çеç пулнă, ăна Берлинран ертсе пынă. Судетри гитлеровецсен пуçлăхĕсен халăх умĕнче каламалли сăмахĕсене те малтан Германи влаçĕсем вуласа тухса тӳрлетнĕ. Халĕ асăннă телеграммăра Германи посолĕ çапла пĕлтернĕ: «Эпĕ Генлейна ятларăм», Генлейн вара çапла тума сăмах пачĕ: «Германин тулашри политики, Германи посольстви пĕлтерекенскер, Судетри нимĕçсен партийĕшĕн пĕр-пĕр тĕрĕс политика пулса тăрĕ, терĕ. Манăн директивăсем хам калакан сăмахсенче хутшăнса пырĕç, хаçатсем эпĕ кăтартнă пек çырĕç».

Генлейна ятлани гитлеровецсемшĕн усăллă пулнă. Генлейн Риббентропа çыру янă. Унта вăл Риббентропа мухтанă, ăна «ют çĕршыв ĕçĕсен çав тери хисеплекен министрĕ» тесе каланă, Судетри нимĕçсем хăйсемшĕн тăрăшнăшăн Гитлера çав тери тав тăваççĕ, вĕсем «фюрершăн» тата темиçе хут вăйларах ĕçлеме сăмах параççĕ, тенĕ. Генлейн куççуль юхтарса çапла ыйтнă: Чехословаки тĕлĕшпе малалла мĕн тумалли çинчен сӳтсе-явма Берлинра пухăнмалли канашлăва мана ярсамăрччĕ, тенĕ. Риббентроп Генлейн çырăвне аякка пăрса хуман. Генлейна Гитлер патĕнче 1938 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче пулнă канашлăва чĕннĕ. Унта вара ăна малашне тумаллине тĕплĕн кăтартса панă.

Айăплаканĕ трибунала панă документсем çакна кăтартса параççĕ: Судетри гитлеровецсем хăйсен сăтăрла ĕçĕсем валли инструкцисемсĕр пуçне тата укçа та илсе тăнă: 1935 çултан пуçласа, Генлейн партине уйăхне 15.000-шер марка, çав партин Берлинри представительне 3.000-шер марка парса тăнă.

Чехословакие тапăнмалли кун çитсе пынă май гитлерла чиновниксем çар тĕлĕшпе хатĕрленес ĕçе те хутшăнма пуçланă. Германин сывлăш-çар аташши, Чехословакин çар сынни тумтирне тăхăнса, Чехословаки тăрăх çӳренĕ, Германин сывлăшри вăйĕсем валли аэродромсем суйланă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах гитлеровецсем Судетра йĕркесĕрлĕхсем тунă. Чехословаки правительстви вара кирлĕ мерăсем йышăннă. Германин официальнăй документчĕсенче кăтартнă тăрăх, Чехословаки правительстви Судетра 150 гитлеровеца тытса хупнă. Çакна хирĕç Германи правительстви пĕр сăлтавсăрах Германире пурăнакан 150 чеха заложник шучĕпе тытса хупнă. Вара çапла каланă: Чехословакире персе вĕлернĕ кашни гитлеровецшăн Германире заложник шучĕпе тытса хупнă Чехословаки гражданне персе вĕлеретпĕр, тенĕ.

Кĕске вăхăт хушши перерыв туса илнĕ хыççăн Олдермен Мюнхенра килĕшӳ тăвиччен тата килĕшӳ тунă хыççăнах нимĕçсем Чехословакие тапăнма мĕнле хатĕрленнине малалла кăтартса панă (çав килĕшӳ вăл Чехословаки укрепленийĕсене Германи аллине панă). Союзниксем Гитлер штабĕн архивĕсенче тата Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче тупнă йышлă документсемпе усă курса, Олдермен çакне лайăх кăтартса парать: Гитлер правительстви, тĕрĕссипе илсен, Чехословакие хирĕç 1938 çулхи çуллапа кĕркуннех вăрçнă. Генлейнăн 1938 çулхи çулла тунă «ирĕклĕ корпусне» Гитлер хушнипе туса хĕçпăшаллантарнă. Гитлер генлейновецсене австриецсен хĕçпăшалне пама хушнă. Иодль хăйĕн дневникĕнче çапла çырнă: Гитлер Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованине çав «ирĕклĕ корпуса» пăхса тăрассине хăй çине илме хушнă. Темиçе кун иртсен, Иодль çапла çырса хунă: «ирĕклĕ корпус» Чехословаки чиккинче хирĕçтерекен 300 ĕç ытла туса ирттернĕ. Çавна пула Генлейн корпусĕ пысăк çухату тӳснĕ. Генлейновецсен кĕске вăхăт хушшинчех 1.500 çын пĕтнĕ тата вĕсем хăйсен йывăр хĕçпăшалне пĕтĕмпех çухатнă. Ĕç çапла ĕнтĕ, питĕ начар пулса тăнă, çавăнпа Гитлер Судетри бандитсен сайралса пыракан отрячĕсене Германи эсэсовецĕсене яма хушнă. Айăплакан Кейтелĕн приказне вуласа парать. Çав приказра эсэсовецсен «Вилĕ пуç» ятлă дивизийĕн икĕ батальонне Генлейăн «ирĕклĕ корпусĕ» аллине пама хушнă, çав корпусăн штабĕ нимĕç территорийĕнче Байрейт сывăхĕнче вырнаçнă.

Çав «ирĕклĕ корпусăн» ĕçĕсемпе составне Бергер свидетель тăрă шыв çине кăларать. Бергер вăл СС обер-фюрерĕ пулнă, вăл ун чухне Генлейн корпусĕпе СС штабĕ хушшинче çыхăну офицерĕ пулса ĕçленĕ. Бергер хăйĕн сăмахĕсене хут çине çырса панă. Çавăнпа хӳтĕлекенсем вăл документа йышăнасшăн мар, вĕсем свидетеле суда чĕнме ыйтаççĕ. Айăплакан çакăнпа килĕшмест, вăл çапла калать: Бергер айăпланакансемшĕн усăллă е сиенлĕ калама пултаракан ют çын мар, вăл—Чехословакие тапăнас ĕçе активлăн хатĕрленнĕ гитлеровецсенчен пĕри пулса тăрать. Хӳтĕлекенсем Бергера хăйсен свидетелĕ вырăнне хурса чĕнес теççĕ пулсан, вĕсем ăна чĕнме пултараççĕ. Пире, айăплакансене, Бергер хут çине çырса пани те çитет. Кĕске вăхăт хушши канашласа пăхнă хыççăн суд хӳтĕлекенсем ыйтнине сирсе янă, анчах та çапла каланă: хӳтĕлекенсем Бергера хăйсен свидетелĕ вырăнне хурса чĕнес теççĕ пулсан, вĕсем ăна чĕнме пултараççĕ, тенĕ. Бергер каласа панине ĕç çумне хушса хума йышăннă. Бергер каласа панинче Генлейнăн «ирĕклĕ корпусĕ» тĕрĕссипе мĕнле корпус пулнине кăтартса панă.

«Генлейн штабĕнче хамăн официальнăй ĕçсене туса тăнă чухне эпĕ ирĕклĕ корпусăн йышĕпе тата активлăхĕпе паллашнăччĕ,—тесе çырать Бергер. — Генлейн командир пулса виçĕ ушкăна ертсе пынă. Çав ушкăнсене Судетран Германие тарнă сынсенчен тунă тесе шутланă, анчах та вĕсене тĕрĕссипе Германи çыннисенчен тунă, çав çынсем унччен штурмовой отрядсенче тата нацистсен мотокорпусĕнче тăнă. Шăп çав нимĕçсем ĕнтĕ ирĕклĕ корпусăн тĕп пайĕ пулса тăнă. Хут тăрăх пăхсан, ирĕклĕ корпусра 40.000 çын пулнă. Эпĕ унта тĕрĕссипе миçе çын пулнине пĕлместĕп, анчах та унтан сахалтарах пулнă пулĕ тесе шутлатăп. Вăл корпуса Австрири нимĕç çарĕн склачĕсенчи винтовкăсемпе хĕçпăшаллантарнăччĕ. Кунсăр пуçне Генлейна темиçе пулемет, гранатăсем тата тытса илнĕ икĕ тупă (танксене пемелли тупăсем) панăччĕ. Хĕçпăшалсен пĕр пайне Генлейна штурмовой отрядсем панăччĕ».

Тепĕр свидетель Германин «хăрушсăрлăх службин» тепĕр паллă работникĕ Альфред Науйокс çакна çирĕплетсе парать: Генлейнăн «ирĕклĕ корпусĕ» Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем хушнă тăрăх разведка ĕçне ăнлăн туса тăнă.

Айăплакан малалла Кейтелĕн темиçе приказне вуласа парать. Çав приказсенчен çакă курăнать: пĕрремĕшĕ, айăплакан Кейтель Чехословакие тапăнма активлăн хатĕрленнĕ çынсенчен пĕри пулнă; иккĕмĕшĕ, нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсем Чехословакие кĕрсе кайма хатĕрленнĕ вăхăтра Генлейнăн «ирĕклĕ корпусĕ» Германи çарĕн шутĕнче тăнă.

Айăплакан, ĕненмелле документсемпе усă курса, çакна кăтартса парать: Германи правительстви Чехословакири нимĕçсене икĕпитлĕн хӳтĕлесе тăнă вăхăтра Германи çарĕ Чехословакие хирĕç усăнах вăрçнă.

Çавăнпа пĕр вăхăтрах Германи çарĕсем Чехословакие хĕçпăшалпа тапăнма хатĕрленнĕ. Анчах та вĕсен тапăнмалла пулса тăман, мĕншĕн тесен, Мюнхенри килĕшӳ тăрăх, Чехословакин Судет территорине унти мĕнпур укрепленисемпе пĕрле нимĕçсен аллине памалла пулса тăнă.

Айăплакан малалла Мюнхенра килĕшӳ тăвиччен темиçе кун малтан Гитлер каланă сăмахăн хăшпĕр вырăнĕсене вуласа парать. Хăй каланă сăмахĕнче Гитлер Судет облаçне Германие пани Германи хăйне çĕнĕ территори пама юлашки хут ыйтнине пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртет тесе тупа тунă. Вăл Германи урăх нимĕнле территори те илме хапсăнмасть, тесе икĕ хут та каланă.

Анчах та çав сăмаха каланă хыççăн икĕ эрнерен тата Мюнхенра килĕшӳ тунă хыççăн 10 кунтан, 1938 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче, Гитлер Чехословакие пĕтĕмпех тытса илмелли план тума хушнă. 11 кун иртсен, вăл çав тĕлĕшпе приказ панă, приказ çине Гитлер алă пуснă тата айăпланакан Кейтель хăйĕн ячĕпе ашшĕ ячĕн пуçламăш сасписене çырса алă пуснă. Çав приказ çине «питĕ секретлă» тесе çырса хунă, ăна 1938 çулхи октябрĕн 21-мĕшĕнче çырнă. Унта çапла каланă: хĕçпăшаллă вăйсен малашнехи задачисене тата çав задачăсем тăрăх вăрçă вăрçма хатĕрленессине каярахпа кăтартса парăп. Çав директива пурнăçа кĕриччен хĕçпăшаллă вăйсен çакăн пек пулассине кĕтсе хатĕр тăмалла: пĕрремĕшĕ—Германи чиккисене кĕтмен çĕртен тапăнасран хӳтĕлесси; иккĕмĕшĕ—Чехословакин юлашки пайне пĕтерсе лартасси, виççĕмĕшĕ—Мемель зонине оккупацилесси».

Айăплакан çав приказăн «Чехословакин юлашки пайне пĕтерсе лартасси» ятлă пайне çеç вуласа парать. Чехословакин юлашки пайне кирек мĕнле вăхăтра та пĕтерсе лартма май пулмалла. Çав задачăна пурнăçа кĕртмешкĕн хĕçпăшаллă вăйсен «симĕс планра» (Чехословакие тапăнмалли планра) кăтартнинчен чылай сахалтарах хатĕрленмелле пулать, анчах та вĕсен яланах хатĕр тăмалла. Çав задачăна пурнăçа кĕртмелли чаçсене организацилессине, приказсем парассине мирлĕ вăхăтрах хатĕрлесе хумалла, Чехословакие кĕтмен çĕртен атакăлама май пулмалла, Чехословаки йĕркеллĕн хирĕç тăма ан пултартăр. Богемипе Моравие хăвăрт йышăнмалла тата Словакие татса илмелле. Чехословакие тапăнма хатĕрленнипе пĕрлех Хĕвеланăçĕнче оборона ĕçĕсене пурне те пурнăçламалла.

1938 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче Кейтель «Чехословакин юлашки пайне пĕтерсе лартасси» çинчен приказ панă. Приказра çапла каланă: «ытти государствăсене Чехословакие лăплантарнă пек çеç курăнса тăтăр, вăрçă ĕçĕ пек ан курăнтăр. Çавăнпа та çак ĕç мирлĕ вăхăтри хĕçпăшаллă вăйсен хăйсен йышне мобилизаци йĕркипе ӳстермесĕрех пурнăçа кĕртмелле». Приказра чехсене çеç мар, пĕтĕм тĕнчене те улталамашкăн мĕнле мерăсем йышăнмаллине, кирлĕ резервсемпе снаряжение чикĕ патне илсе пынине мĕнле пытармаллине тĕплĕн кăтартса панă. Чехословакие тапăнма хатĕрленес ĕçе ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви те хутшăннă. Риббентроп Чехословакин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Хвалковскипе 1939 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче тĕл пулса калаçни çинчен çырнă меморандума çумне Риббентроп хăй аллипе çапла çырса хунă: «Чехословаки правительстви Германи тĕлĕшпе ырă кăмăллă пулнине хакламашкăн Чехословаки çарĕн йышне хăвăрт чакарни кирлĕ, терĕм эпĕ Хвалковские», тенĕ.

Каçхи лару çакăнпа пĕтет.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителен ... секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ял хуçалăх пайĕн—2-9?, ... пайĕн—0-67, издательство директорин — 0-23.

Типографи № 1 Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.

НГ 04026